**Президент библиотекин филиалĕ – Чăваш Енре : [вулаканан ыйтнине хуравлани]**

Шупашкар хулинче Б.Н. Ельцин ячĕлл библиотека мĕнле майпа усăллă-ши? Çак библиотека мĕнле тытăнса тăрать?

И.В. Владимиров, ĕç ветеранĕ.

Чăваш Республикин Наци библиотекин директорĕн информатизаци енĕпе ĕçлекен çумĕ Галина Александровна Быкова çапла хуравларĕ: «Санкт-Петербургра вырнаçнă Б.Н.Ельцин ячĕллĕ Президент библиотеки - Раççейре библиотека ĕçĕн çĕнĕ ĕмĕрĕ пуçланнине палăртакан пулăм - Раççей Федерацийĕнчи виçĕ наци библиотекинчен пĕри.

Президент библиотеки - электрон библиотеки. Ăна обществăра, уйрăмах çамрăксен хуш-шинче, патшалăх, гражданлăх, патриотизм идейисене çирĕплетме, пĕр пĕтĕмĕшле информаци уçлăхне йĕркелеме никĕсленĕ. Президент библиотекин фондĕнче сайра тĕл пулакан истори докуменчĕсемпе кĕнекесен, унччен вулакансен аллине ирĕклĕн лекме пултарайман архив материалĕсен, авалхи ал çырăвĕсен, карттăсен, фотоальбомсен, хаçатсемпе монографисен 42 пин ытла электрон версийĕ шутланать. Ăна Раççей патшалăх истори архивĕн, Раççей Феде-рацийĕн патшалăх архивĕн, Раççей патшалăх библиотекин, Раççей наци библиотекин тата çĕр-шыври регион библиотекисен фончĕсем пуянлатаççĕ. Электронла фондпа библиотекăн çĕр-шыври регион филиалĕсенче паллаштарма палăртнă. РФ Президенчĕн 2007 çулхи çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнчи хушăвĕпе Б.Н.Ельцин ячĕллĕ Президент библиотекин филиалĕсене Раççей Федерацийĕн мĕн пур субъектĕнче уçма йышăннă.

Чăваш Республики филиал тытăмне йĕркелес ĕçе хутшăнма килĕшĕве алă пуснă пиллĕкмĕш регион пулса тăчĕ.

*Быкова, Г. А. Президент библиотекин филиалĕ – Чăваш Енре : [вулаканан ыйтнине хуравлани] / Г. А. Быкова // Хыпар. – 2011. – 12 нарăс. – С. 13. – (Ыйту-хурав / кăларăма Валентина Багадерова хатĕрленĕ).*